# ХӖЛ МУЧИ ПАРНИ

**10 ҫул тултарсанах Хӗл Мучие эпӗ ӗненми пултӑм. Шкулти елкӑсенче ачасем Хӗл Мучи тумне тӑхӑнни питӗ кулӑшла пек туйӑначчӗ. Эпӗ Ҫӗнӗ ҫула ухмах ачасем кӑна кӗтеҫҫӗ пулӗ теттӗм. Ӑслисем вара /ман пеккисем/ парнесене атте-анне илнине те, уявра пире артистсем савӑнтарнине пӗлеҫҫӗ тесе шухӑшлаттӑм. Анчах та пӗлтӗр, раштавӑн 29-мӗшӗнче, эпӗ Ҫӗнӗ ҫула пӗчӗк ача пек ҫӗнӗрен ӗненме пуҫларӑм.**

Яланхи пекех шкулти Ҫӗнӗ ҫул елки хыҫҫӑн суя Хӗл Мучипе Юр пикен начар енӗсене юлташсене пурне те илтмелле каласа утрӑм. Ҫын ҫитменлӗхӗ таҫтанах курӑнать-ҫке. Хӑш-пӗр ҫӗрте манпа юлташсем килӗшрӗҫ, хӑш-пӗр вырӑнта мана пӳлсе те хирӗҫлерӗҫ. Ҫӗнӗ ҫула кӗтмен тата ӗненмен ҫынпа калаҫма йывӑр пулин те пӗрле вӗренекенсем манпа тупӑшма тӑрӑшрӗҫ.

Киле ҫитсен атӑ-пушмака хывса петӗм те вырӑн ҫине канма выртрӑм. Мӗншӗн эпӗ ҫав тери телейсӗр-ши? Пурте ҫитес уяв ҫинчен калаҫаҫҫӗ, пурте ӑна кӗтеҫҫӗ, пурте мӗнле те пулин асамлӑх пуласса шанаҫҫӗ. Мӗн ӑна кӗтнин усси: мана ҫавах никам та саламламӗ, нимӗнле парне те памӗ. Эпӗ йӗрсе ятӑм...

Тепӗр кунне 16 сехет иртсен апат ҫинӗ хыҫҫан кӳршӗри Наташа патне кайса килес терӗм. Тулта ҫил-тӑман ҫавӑрать. Утма та май ҫук. Урама тухсан ҫул урлӑ анчах каҫас тенӗччӗ —таҫтан умра ҫутӑ пулса кайрӗ, виҫӗ урхамах сиксе тухрӗ, «Тр-р-р!»— тенӗ хулӑн сасӑ илтӗнсе кайрӗ. Ман умра Хӗл Мучи тумне тӑхӑннӑ арҫын тӑра парать! Хӑй шап-шурӑ сухаллӑ, хӑвак тӗслӗ халачӗ кӗмӗллӗн-мерченӗн ҫуталса тӑрать. Каснӑ-лартнӑ Хӗл Мучи!

— Ух! Аранах пӗр ҫынна куртӑм. Пурте ҫил-тӑманран пытанса пӗтнӗ тейӗн. Эсӗ, мӑнукӑм, кун пек ҫанталӑкра ӑҫта кайма тухнӑ вара?— ыйтрӗ сасартӑк манран палламан ҫын.

— Эпӗ Наташа патне,— хуравларӑм ним пулман пек.

— Лайӑх, хӗрӗм, юлташ патне кайма яланах вӑхӑт тупмалла. Манӑн ача-пӑча ҫуртне Ҫӗнӗ ҫула уявлама ҫитмелле. Пулӑш-ха, эпӗ ку ҫил-тӑманра ҫухалса кайрӑм. Халӗ хӑш ялта пулнине те пӗлместӗп .

— Ку Ҫӳлтикасси ялӗ,—хуравларӑм эпӗ.

— Ҫӳлтикасси, Ҫӳлтикасси...Эпӗ ку ялти ачасене паллатӑп-ҫке! Маша Иванова манран пукане ыйтнӑччӗ, Коля Степанов вара компьютер ҫинчен ӗмӗтленет... Ачисем лайӑх, ӗмӗчӗсене пурнӑҫламалла пулӗ... Эсӗ вара Ҫӗнӗ ҫулта мӗн кӗтетӗн?

— Эпӗ ача-пӑча вӑхӑтӗнчен тухнӑ, мана нимӗн те кирлӗ мар. Атте-аннен те эпӗ ӗмӗтленнине ҫавах пурнӑҫлаймӗ...— кӑнттаммӑн хуравларӑм эпӗ.

Арҫын ман ҫине шеллесе пӑхрӗ, анчах та нимӗн те чӗнмерӗ. Эпӗ ҫул урлӑ каҫрӑм та Наташӑсем патне кӗрсе кайрӑм.

Пулса иртни ҫинчен самантрах мантӑм. Ҫӗнӗ ҫула ыттисем пек 12 сехетчен кӗтсе лармарӑм, вуннӑ иртсен ҫывӑрма выртрӑм. Тӗлӗкре ҫав пӗр кун курнӑ арҫын таҫтан килсе кӗчӗ те: «Санӑн ӗмӗтӳсене пурнӑҫлама йывӑр пулсан та пурнӑҫларӑмах, телейлӗ пул, хӗрӗм», — терӗ те пуҫран ачашласа илчӗ. Эпӗ хӑранипе вӑранса кайрӑм. Хам та кӗтмен ҫӗртен «Анне!!!» тесе кӑшкӑрса ятӑм...

Пӗрремӗш кӗтмен парне маншӑн — аннепе атте мирлешни пулчӗ. Атте ҫулталӑк каялла пире пӑрахса тухса кайнӑччӗ, аннепе уйрӑлма та ӗлкӗрнӗччӗ кайсан унӑн иккӗмӗш сыпӑкри пиччӗшӗпе паллашрӑм. Вӑл манран пӗр ҫул кӑна аслӑрах иккен, анчах та чылай ҫӳллӗ, тӗреклӗ. Ун пек каччӑпа ниҫта тухма та вӑтанмалла мар. Вӑл та мана килӗштернине тепӗр уйӑхран Наташӑран, кӑшт каярахран хӑйӗнчен те пӗлтӗм. /Ку сире интереслӗ пулсан, тен, хаҫата та ҫырса пӗлтерӗп/.

Ҫак ҫулталӑк хушшинче хам та чылай

**«Санӑн ӗмӗтӳсене пурнӑҫлама йывӑр пулсан та пурнӑҫларӑмах, телейлӗ пул, хӗрӗм,» — терӗ те пуҫран ачашласа илчӗ.**
**Эпӗ хӑранипе вӑранса кайрӑм. Хам та кӗтмен ҫӗртен «Анне!!!» тесе кӑшкӑрса ятӑм...**

улшӑнтӑм. Эпӗ пур уява та чӑтӑмсӑр кӗтме пуҫларӑм, хам та ыттисем валли парнесем хатӗрлеме тытӑнтӑм: анне валли чечеклӗ алсыш ҫыхрӑм, атте валли — шарф, тусӑм валли вара.../ йӑлтах ҫырам мар-ха, парнен вӑрттӑнлӑхӗ ҫухалать/. Кӑҫал вара эпӗ хамӑр шкулта Юр пике пулатӑп. Шкул ачисем Ҫӗнӗ ҫула ӗненесси мантан та нумай килнине ӑнланса



/пӗрле Ҫӗнӗ ҫул кӗтсе илни пӗрремӗш хут пулчӗ/. Вӑл мана уяв ячӗпе компьютер илсе пачӗ, анне вара кӗсье телефонне хатӗрленӗ пулнӑ. Парнешӗн мар, эпӗ вӗсем мирлешнишӗн ытларах савӑнтӑм. Чӑннипе каласан, вӗсем пӗрле пуласса шанма та пӑрахнӑччӗ эпӗ.

Иккӗмӗш кӗтмен парне мана тепӗр кунне савӑнтарчӗ. Эпӗ Наташӑсем патне ҫине тӑрсах роле вӗренетӗп. Иртнӗ ҫул манӑн мӗн пур ӗмӗт пурнӑҫланчӗ. Эпӗ чи телейлӗ ҫын! Халӗ эпӗ пӗр япала ҫинчен кӑна ӗмӗтленетӗп: Хӗл Мучие тепре курасчӗ те чи хаклӑ парнешӗн тав сӑмахӗ каласчӗ.

Ачасем, ӗненӗр Ҫӗнӗ ҫула, ӗненӗр асамлӑха, ӗненӗр Хӗл Мучин парнисене!!!...

**Ирина**